## «Çĕмĕресси тăвассинчен çăмăлтарах» юптару тăрăх хатĕрленĕ инсценировка

**Автор:**Иван пичче пурнать ман кӳршĕре,
Ватах та мар, пĕлместĕп миçере.
Пур ун çемйи: арăм, ывăлсем,
Ӳссе вăй илнĕ çамрăксем.

Эх, пĕвĕпе патвар
Ӳсеççĕ хĕрĕсем,
Хитрескерсем.
Юрра-ташша та пит ăста

**(Юрă : Алина Савельева «Хут купăс») (Хĕр ачасем ташлаççĕ)**

**Автор:**
Кил-çурчĕ япăх мар,
Кăшт кивĕрех пулсан та — питĕ.
Хуралтăра: кĕлет, вите тата ытти те.
Кил картинче пур тĕрлĕ
Хур-кăвакал та выльăх-чĕрлĕх.
Тавах Турра, пурнаççĕ хирĕçӳсĕр.
Иван пичче пулман нихçан та ӳсĕр.
Хуçалăхра йĕркелĕх яланах.
Анчах...
Пĕр ăшă ирхине
Тем пулчĕ пиччене...
Шуйттан çури çакланнă пуль чунне.
Лара-тăра пĕлмесĕр уткалать,
Чарăнаймасăр калаçать.

**Иван пичче:**
- Çитет халь пурăнмашкăн кив çуртра,
Чӳречисем ун ансăр та маччи лутра.
Пăсатăп та тĕпрен
Тăвататăп кирпĕчрен
Кермен!
Эй, ывăлсем, килĕр-ха кунта!
**(Пӳрте пăсса тăкаççĕ.**
**Сасă: пӳрт пăсни)**

**Автор:**
Каланă — тунă.
Сисмерĕ те ял-йыш — пăсса та хунă.
Иртет виç кун, виçĕ эрне —
Ял-йыш курмасть ĕç пынине.

**Звук молотка. Арçын ачасем мăлатук çапса ларнă пек тăваççĕ)**

**1-м.ачи:**
-Ванюк, ывăнтăн-и эсĕ?
**2-мĕш ачи:**
-Ăхă! Халтан кайрăм, вăййăм çук!
**1-мĕш ачи:**
-Кӳршĕ ачисем телейлĕ
Мĕн тени йăлт пур вĕсен!
**2-мĕш ачи:**
- Пирĕн вара çурт та çук!

**1-мĕш ачи:**
- Эй-яй-яй, мĕн тумалла.?
Хăçан пулĕ çĕнĕ çурт?

**Автор:**

Иван пичче çухатнă канлĕхне
Лавккасенче куллен чупать,
Темскер шырать —
Хăй каламасть-ха сăлтавне.

Сăмах кăна çӳрет ялта:
Çитмест иккен хăма, пăта.
Час-час халь эпĕ куршĕрен
Шăв-шав илтетĕп ирпелен.

**Арăмĕ:**
-Шуйттан пуль çавăрчĕ пуçна,
Мĕскершĕн пăсрăн кив çурта?
Халь ĕнтĕ епле пурăнмалла,
Эх, санпа!!!
**Иван пичче**: -Ан сӳпĕлтет!
Кĕç пулĕ çĕнĕ çурт
Йăлт кирпĕчрен-
Кермен!!
(Иван пиччепе арăмĕ кĕрсе каяççĕ)

(Хĕр ачасем тухаççĕ. Аппăшĕ икĕ витрепе шыв йăтнă, йăмăкĕ хыçран чупса пырать)
**Маша:**
-Аппа, атя урама
Лапталла халь выльăпăр.

**Карина:**
-Çук, йăмăкăм, вăхăт çук
Аннене пулăшмалла.
Кил-çуртра ĕç туллиех.

**Маша:**

-Пăсасса йăлт пăсрăмăр
Çуртран нимĕн те юлман.
Халь ку çитмест, тепри те çĕмрĕк,
Пурнатпăр сивĕ мунчара.

**(Иван пичче тухать, тайкаланса утать, сцена варрине çитсен кайса ӳкет)**

**Автор:**

Иван пичче, сăмах çӳрет,
Эрех сыпма пуçланă, тет.
Ял-йыш курать:
Хуçалăх юхăнать.

**(Сасă: çын харлаттарни)**

(Иван пичче сцена варринче выртать, ачисем тухаççĕ те ăна тăратма хăтланса пăхаççĕ, аллисенчен турткалаççĕ)

**Автор:**

Пур ял-йыша пĕлсе тăма
Каласшăн хам сăмахăма.
Ĕçне тума тытăниччен,
Ишсе те çĕмĕрсе пăрахиччен
Çакна шута илесчĕ маларах:

<u>**Пурте:**</u>

<u>Çĕмĕресси тăвассинчен çăмăлтарах!</u>